# СЫСНАНА — ПАЛĂК



**Тĕнчере тĕрлĕ палăк пур. Эпир паян, ҫитес ҫул Хĕрлĕ Сысна ҫулĕ пулнине шута илсе, ҫак чĕр чуна халалласа лартнă палăксем ăҫта-ăҫта пулнине тата вĕсене мĕншĕн лартнине тишкерĕпĕр.**

### ПОЛЬША

2004 ҫулта Польшăри Седлец тăрăхĕнче вырăнти самоуправлени ҫурчĕ умĕнче сыснана палăк лартнă пулнă. Палăка ҫăкаран касса тунă, вăл 3,5 тонна таять. Палăк лартас шухăша вырăнти ҫынсем тытнă. Мĕншĕн тесен вĕсенчен 80 процентчĕ сысна ĕрчетет.

### ГЕРМАНИ

Мюнхен хулинче сыснасем питĕ популярлă. Хула варринче пĕр-пĕринчен 200 утăмра вырнаҫнă сыснасене халалланă 2 палăк пур. Германин телей символĕсенчен пĕри — **Gluckschweinchen** сысна ҫури. Ăна ытларах Раштав тата Ҫуралнă кун открыткисем ҫинче сăнланă. Нимĕҫле Er hat Schwein тени «ăна ăнать» тени пулнă. Кăнтăр Германире Ҫĕнĕ Ҫул сĕтелĕ ҫине пĕҫернĕ сысна пуҫне лартаҫҫĕ.

### ПОРТУГАЛИ

Мурса поселокĕнче сыснана палăк лартнă. Археологсен шучĕпе, ăна ибер е луизитан йăхĕсем тунă. Вăл йăх тотемĕ те пулма пултарнă.XVII ĕмĕрте вырăнти помещик ăна постамент ҫине ҫĕкленĕ. XIX тата XX ĕмĕрсенче влаҫа «монархистсемпе» «прогрессистсем» пайланă. Монархистсем сыснана симĕс тĕслĕ сăрланă, вĕсене хирĕҫлисем — хĕрлĕ. Паян сысна хула элемĕн /герб/ пĕр пайĕ.

### ДАНИ

Данире сĕм авалтанах сысна перекетлĕх символĕ шутланать. Оркус хули варринчи ратуша умĕнче сысна палăкне лартнă. Унăн скульпторĕ — Могенс Боггильд. Вăл палăкра сысна ами ҫине чакаланакан сысна ҫурисем сăнланă, ăна бронзăран тунă.

### ТАИЛАНД

Бангкок хулинче Сысна ҫулĕнче ҫуралнă Сиам королевине халалласа сысна палăкне лартнă. 2 метр ҫӳллĕш постамент ҫинче хăйĕн асав шăлĕсене кăтартса сысна ларать. Унăн ҫăварĕнче — чечексем, мăйĕ тавра тутăр ҫыхнă.

### УКРАИНА

Полтавăра сыснана 2 палăк лартнă. Пĕр палăкĕ сысна амăшне сысна ҫурисемпе сăнлать. Тепĕр палăкĕ — хĕрачапа арҫын ача пысăк сыснана хулăпа хăвалаҫҫĕ. Ун ҫинче вара: «Украин халăхне ĕмĕр тăрантаракана» тесе ҫырнă.

2000 ҫулта вара Сумск облаҫĕнчи Ромны хулинче Пĕтĕм Украинăн сысна ҫĕвне юратакансен «Мы против свинства, но за развитие свиноводства» ятлă кулăш фестивалĕ иртнĕ. Ҫак уявра кайри урисем ҫинче ларакан сысна палăкне уҫнă. Ун ҫине вара «Сыснана пархатарлă Ромны ҫыннисенчен» тесе ҫырнă.

### АНГЛИ

Плимут хули ҫумĕнчи тĕмеске ҫинче XVIII ĕмĕрте вилнĕ Купидон сыснана халалланă палăк пур. Ҫак палăка Маунт Эджкамб графиня лартма хушнă. Вăл Купидона питĕ юратнă, унпа раутсенче пулнă.

# «Хăвна хӳтĕлеме пултаратăн-и?»

## ТЕСТ

**1. Савнипе хирĕҫсе кайсан...**
а) Хăвна айăплă туятăн - 3 балл
ă) Кăшкăратăн - 1 балл
б) Ăна ăнланма тăрăшатăн - 2 балл

**2. Юлташу калаҫăва пӳлсен мĕн тăватăн?**
а) Хăйне те пӳлетĕп - 2 балл
ă) Ҫăварне хупма ыйтатăп - 3 балл
б) Ҫын калаҫнă чухне шăпăрт тăмалли пирки аса илтеретĕп - 1 балл

**3.Кая юлнăшăн ĕҫтешӳ тĕртсе илчĕ. Мĕн хуравлатăн?**
а) «Тусăм, санăн та ҫывăрса тăранасчĕ» - 1 балл
ă) «Кая юласси пурин те пулать» - 2 балл
б) «Питĕ шел» - 3 балл

**4.Телепередача ертсе пыракан йăнăшĕсене тӳрлетес килмен-и?**
а) Нихăҫан та - 3 балл
ă) Хушăран - 2 балл
б) Час-часах -1 балл



**5.Тухтăр пӳлĕмĕнче ҫын нумай. Мĕн тетĕн?**
а) Паян районĕпех чирленĕ-им? -1 балл
ă) Нимĕн те - 3 балл
б) Сывлăх сунатăп - 2 балл

**6.Мĕнле калаҫнине килĕштеретĕн?**
а) Кӳҫран пăхса - 3 балл
ă) Ăслă калаҫăва - 1 балл
б) Алăсемпе ăнлантарса - 2 балл

6-9: Эпĕ нихăҫан та ҫухалса каймастăн, кирек кам ҫăварне те хупма пултаратăн. Анчах тепĕр чухне ҫынна итлеме те пĕлмелле.

10-14: Чĕмсĕртерех эсĕ, хушша-хуппа кĕме юратмастăн. Кăмăл лайăх чухне вара вирлĕ Сăмахсемпе асăрхатарма пултаратăн.

15-18: Мĕн те пулин персе яриччен тĕплĕ шухăшлатăн. Ҫынсене итлеме пĕлни лайăх, ҫакна юлташусем те хаклаҫҫĕ. Анчах хушăран тăшмана вырăна лартни те пăсмасть.

АВРОРА

# ПĔЛМЕ КĂСĂКЛĂ

● Пăлхарсем Ҫĕнĕ ҫул каҫĕнче темиҫе минутлăх ҫутă сӳнтереҫҫĕ. Ҫак вăхăта вĕсем Ҫĕнĕ ҫулти чуп тумалли минутсем теҫҫĕ.

Италинче Ҫĕнĕ ҫул каҫĕнче кивĕ япаласене кăларса пăрахаҫҫĕ. Ҫапла тусан Ҫĕнĕ ҫулта килте ҫĕнĕ япаласем нумай пуласса ĕненеҫҫĕ.

Ҫĕнĕ ҫул уявласси 25 ĕмĕр хушши тăсăлать.Чылай халăх малтан Ҫĕнĕ ҫула пуш уйăхĕнче ирттернĕ. Ку вăхăтра хăш-пĕр ҫĕрте ҫур аки пуҫланать, хăш-пĕр ҫĕрте вара тĕнче хĕл ыйхинчен вăранма кăна тытăнать. Ҫавна шута илсе нумай халăхăн пĕрремĕш уйăхĕ пуш уйăхĕ пулнă.

Кăрлачăн 1-мĕшĕнче Ҫĕнĕ ҫула уявлама Юлий Цезарь Рим императорĕ пирĕн эрăччен 46 ҫулта ҫырнă хушуран пуҫланнă. Кайран вара Еропăри пур патшалăх те ҫак кун Ҫĕнĕ ҫула уявлама тытăннă.

***Шпаргалка /ыйтăвĕ 6-мĕш стр-цăра/***

Вăл сутуҫăран хачă кирлине ыйтать.

*Задача*

Задача Задача Задача Задача Задача Задача

Ҫаврака уҫланкă тавра йывăҫсем лартса тухнă. Инеслупа Ира уҫланкă хĕррипе утса йывăсем шутлаҫҫĕ. Вĕсем пĕр еннеллех каяҫҫĕ, анчах та тĕрлĕ вырăнтан шутлама пуҫланă. Ирăн 7-мĕш йывăҫ пулсан, Инеслун — 20-мĕш. Инеслун 7-мĕш йывăҫĕ, Ирăн — 93-мĕшĕ. Уҫланкă йĕри-тавра миҫе йывăҫ ӳсет?

Шпаргалка: /тĕкĕр витĕр пăхăр/

99 йывăҫ